ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ÇУЛ ÇИТМЕН ÇАМРĂКСЕМПЕ ĔÇЛЕКЕН ТАТА ВĔСЕН ПРАВИСЕНЕ ХЎТĔЛЕКЕН КОМИССИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хўтĕлекен комиссисем çинчен" 2005 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 68 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 66, 69 №-сем; 2012, 95 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2015, 6, 12 №-сем; 2017, 5 №; "Республика" хаçат, 2017, чўк уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2018, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чўк уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000252 №; "Республика" хаçат, 2024, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 5 статьяра:

а) 2^1-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас, "тата çамрăксен политикин" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) 7-мĕш пайра:

иккĕмĕш тата виççĕмĕш абзацсене çакăн пек çырса хурас:

"çул çитмен çамрăксен хисепĕ ултă пин çын таран (ултă пине кĕртсе) йышлă муниципаллă округсенче – штатра тăракан икĕ çын, ултă пинрен

иртсе вун пилĕк пин çын таран (вун пилĕк пине кĕртсе) йышлă муниципаллă округсенче – штатра тăракан виçĕ çын, вун пилĕк пин çынран ытларах йышлă муниципаллă округсенче – штатра тăракан тăватă çын;

çул çитмен çамрăксен хисепĕ аллă пин çын таран (аллă пине кĕртсе) йышлă хула округĕсенче – штатра тăракан пилĕк çын, аллă пинрен иртсе çĕр пин çын таран (çĕр пине кĕртсе) йышлă хула округĕсенче – штатра тăракан вунă çын, çĕр пин çынран ытларах йышлă хула округĕсенче – штатра тăракан вун пилĕк çын.";

тăваттăмĕш–улттăмĕш абзацсем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

2) 6 статьян 2-мĕш пайĕн пиллĕкмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

3) 7 статьян 3-мĕш пайĕн пиллĕкмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун, çак Саккунăн 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрекен 1 статйин 1-мĕш пункчĕн "ă" çум пункчĕсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ
93 №